28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
13
ЭРНЕКУН
70(6821) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 10-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронтӑн даннӑйӗсем тӑрӑх, апрелӗн 9-мӗшӗнче 21 сехет те 30 минут иртнӗ хыҫҫӑн, урӑхла каласан—нимӗҫсен КЕНИГСБЕРГРИ ҫарӗсем хирӗҫ тӑма пӑрахнӑ хыҫҫӑн, апрелӗн 10-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле тата апрелӗн 10-мӗшӗнче кӑнтӑрла 50.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне яхӑн тыткӑна парӑннӑ.

Ҫапла вара, нимӗҫсен КЕНИГСБЕРГРИ группировкине пӗтерсе тӑкасшӑн пынӑ ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче, урӑхла каласан—апрелӗн 6-мӗшӗпе 10-мӗшӗ хушшинче, пӗтӗмпе 92.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Ҫав вӑхӑт хушшинчех нимӗҫсен 42.000 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

Тыткӑна лекнисем хушшинче 1.819 офицер тата 4 генерал: тӗреклетнӗ Кенигсберг районӗн коменданчӗ инфантери генералӗ ЛЯШ, крепость коменданчӗн заместителӗ генерал-лейтенант МИКОШ, нимӗҫсен 61-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ генерал-лейтенант ШПЕРЛЬ, нимӗҫсен 367-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ генерал-майор ХЕНЛЕ.

Фронт ҫарӗсем ҫакӑн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНӖ: хир тупписем—2.023, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—89, минометсем—1.652, пулеметсем—4.673, бронетранспортерсем—119, бронепоездсем—2, автомашинӑсем—8.560, тракторсемпе тягачсем—137, паровозсем—774, вагонсем—8.544, катерсемпе баржӑсем—146, ҫар пурлӑхӗн склачӗсем — 441.

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: самолетсем—120, хир тупписем—1.193, минометсем—568, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем — 104, бронетранспортерсем — 82, автомашинӑсем—1.719, паровозсем—23, вагонсем—215, ҫар пурлӑхӗн склачӗсем—77.

Апрелӗн 10-мӗшӗнче Земланд ҫурутравӗнче КЕНИГСБЕРГРАН хӗвеланӑҫнерехре БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем МЕТГЕТЕН, МОДИТТЕН, КЛАЙН ФРИДРИХСБЕРГ, ГРОСС ХОЛЬШТАЙН ялӗсене ҫапӑҫса туртса илнӗ.

БРАТИСЛАВӐРАН ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата ҫурҫӗртерехре УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Чехословаки ҫӗрӗнче ТРЕНЧИН хулине тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—ВЕЛКИ БЬЕРОВЦЕ, МИАВЦИ, ПАНЫЦИ, КАДЛЕЧИЦЫ, МИЧЕ, ХРОПОВ, КОВАЛЕВЕЦ, ПОПУДИНИ ятлӑ пысӑк ялсем. БРАТИСЛАВӐРАН ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре фронт ҫарӗсем, ДУНАЙ шывӗн ҫурҫӗр хӗррипе малалла тапӑнса пырса, ГЕНЗЕРНДОРФ хулипе ДОЙЧ-ВАГРАМ хулине тата ВАЙКЕНДОРФ, ШТРАССХОФ, МАРКГРАФНОЙЗИДЛЬ, ПАРБАСДОРФ, ГРОССХОФЕН, ГЛИНЦЕНДОРФ, РУТЦЕНДОРФ, ФРАНЦЕНСДОРФ, ВИТТАУ, ОБЕРХАУЗЕН, МЮЛЬЛАЙТЕН ялӗсене туртса илнӗ.

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах ВЕНА хули урамӗсенче ҫапӑҫнӑ, хулан ДУНАЙ каналӗн хӗвеланӑҫ хӗрринче вырнаҫнӑ районсене пурне те тӑшмантан тасатнӑ. Апрелӗн 9-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 2.000 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: танксем—72, бронетранспортерсем—85, хир тупписем—75, пулеметсем—174.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Апрелӗн 9-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 54 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 28 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ПИЛЛАУ ТАТА ХЕЛЬ ПОРЧӖСЕНЕ ПЫРСА ҪАПНИ

Апрелӗн 10-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн йывӑр бомбардировщиксем Пиллау тата Хель порчӗсене пырса ҫапнӑ. Ҫапла пырса ҫапнине пула, ҫав портсенче вӑйлӑ пушарсем тухнӑ. Пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

АПРЕЛӖН 11-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 11-мӗшӗнче Карпат тӑвӗсен тӑрӑхӗнче, РУЖОМБЕРОК хулинчен хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем чехословаксен тата румынсен ҫарӗсемпе пӗрле малалла тапӑнса пынӑ. СВЯТОЙ МАРТИН хулипе чугун ҫул станцине, ВРУТКИ ятлӑ узловой чугун ҫул станцине тата халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла ҫапӑҫса туртса илнӗ, вӑл шутра—ШУТОВО, РАТКОВО, ТУРАНИ, СУЧАНЫ, ДРАШКОВЦЕ, ЗАБАРЬЕ, ЖАБОКРЕКИ, БИСТРИЧКА, ТРЕБОСТОВО, ПРИБОВЦЕ, ВАЛЧА, ЛАЗАНЫ, ВРИЦКО ятлӑ пысӑк ялсем.

БРАТИСЛАВӐРАН ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем Морава шывӗнчен хӗвеланӑҫнелле наступлени туса пынӑ, Австри ҫӗрӗнче ДЮНКРУТ, ШТИЛЛЬФРИД, ОЛЛЕСДОРФ, ВЕЙДЕНДОРФ, ЭБЕНТАЛЬ, ПРОТТЕС, ОРЕЛЬМ, ШПАННДЕРГ, МАЦЕН, РАГГЕНДОРФ, РЕЙЕСДОРФ ялӗсене туртса илнӗ.

ВЕНАРА УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем ДУНАЙ каналӗ урлӑ каҫнӑ та хулан ДУНАЙ шывӗпе канал хушшинче вырнаҫса ларнӑ районӗн кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ ҫуррине туртса илнӗ. Апрелӗн 10-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 2.400 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—25, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем — 39, бронетранспортерсем—21, хир тупписем— 38, пулеметсем—282.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Апрелӗн 10-мӗшӗнче нимӗҫсен 13 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 16 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Апрелӗн 11-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле тата апрелӗн 11-мӗшӗнче кӑнтӑрла пирӗн йывӑр бомбардировщиксем тӑшманӑн Бреслау хулинчи ҫарпа промышленность объекчӗсене пыра-пыра тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, пушарсем нумай тухнӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ.

* * *

Ружомберок хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем чехословаксен тата румынсен ҫарӗсемпе пӗрле ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ. Тӑшман тусем ҫинчи ҫулсене хӳтӗлеме пӗр тӑрӑх оборона туса хунӑ, Святой Мартин хулипе Врутки чугун ҫул станцийӗнчен—хирӗҫ тӑмалли вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ узел туса хунӑ. Пирӗн наступлени туса пыракан чаҫсем ҫав вырӑнтан аякран иртсе кайнӑ. Вӗсем вӑрмансем витӗр тата тусем ҫинчи хӗсӗксемпе пырса, Врутки чугун ҫул станцийӗ патне ҫурҫӗр енчен, Святой Мартин хули патне кӑнтӑр енчен пырса тухнӑ. Ҫӗрле пирӗн ҫарсем ҫав тери хӑвӑрт атакӑланӑ та ҫав станципе хулана, нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсем пулса тӑракансене, штурмласа туртса илнӗ. Врутки поселокӗнче паровозсем тӑвакан пысӑк завод пур. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, пирӗн подразделенисем темиҫе тӗлте Турвец шывӗ урлӑ каҫнӑ та 10 километр малалла кайнӑ. Трофейсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Братиславӑран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. Нимӗҫсем ку района хыпаланса пехотӑпа танксен ҫӗнӗ вӑйӗсене илсе пынӑ та, контратакӑсем тӑва-тӑва, советсен наступлени туса пыракан чаҫӗсене чарма хӑтланаҫҫӗ. Тӑшмана каялла хӑваласа ярса, пирӗн ҫарсем чылай ялпа темиҫе чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Нимӗҫсенчен 44 паровоз, 1.050 вагон, ҫар пурлӑхӗн 5 складне тата ытти трофейсем те тытса илнӗ. Тӑшманӑн 450 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Венӑра Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсем тӑшманпа хула урамӗсенче ӑнаҫлӑн ҫапӑҫнӑ. Артиллери персе хӳтӗлесе тӑнипе, совет чаҫӗсем темиҫе тӗлте Дунай каналӗ урлӑ каҫнӑ. Нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, пирӗн штурмлакан отрядсем хулари электричество станцине туртса илнӗ. Тӑшмантан Пратер паркне тасатнӑ. Нефть склачӗсене туртса илнӗ. Совет подразделенийӗсем тӑшман оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсене аякран кайса ҫавӑрса илеҫҫӗ те вӗсен гарнизонӗсене пӗтере-пӗтере тӑкаҫҫӗ. Тӑшман темиҫе хутчен те контратака тунӑ, анчах та гитлеровецсене кашнинчех пысӑк ҫухатусем кӳрсе сире-сире янӑ. Кун каҫиччен 4.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

Гварди лейтенанчӗ Мельников командир пулса ертсе пыракан боецсен ушкӑнӗ нимӗҫсен оборона валли тӗреклетнӗ пӗр ҫуртне хупӑрласа илнӗ. Хӑюллӑ воинсем ҫав ҫурта вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та темиҫе вунӑ гитлеровеца вӗлерсе пӑрахнӑ, 78 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Гвардин кӗҫӗн лейтенанчӗ Панфилов тӑшман контратакине сирсе янӑ чухне, танксене пемелли пӑшалпа персе, нимӗҫсен виҫӗ бронетранспортерне ҫунтарса янӑ. Гвардин старши сержанчӗ Тафинцев тата гварди сержанчӗ Папаев разведкӑра чухне гитлеровецсен ушкӑнӗпе тӗл пулнӑ. Папаев ҫав гитлеровецсене пеме пуҫланӑ, Тафинцев вӑл хушӑра нимӗҫсен хыҫне кайса тухнӑ та, тӑшманӑн 6 салтакне автоматпа персе вӗлернӗ. Вара ыттисем тарса пӗтнӗ. Гвардин кӗҫӗн лейтенанчӗ Коробов командир пулса ертсе пыракан хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ экипажӗ пӗр ҫапӑҫура нимӗҫсен танкне тата икӗ станковӑй пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Никитин капитан ертсе пыракан штурмовиксен ушкӑнӗ тӑшманӑн артиллери позицийӗсене атакӑланӑ, нимӗҫсен 4 тупине тата боеприпассем тиесе лартнӑ 15 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Летчик Скотников капитан нимӗҫсен Дунай шывӗ тӑрӑх нефть турттарса пыракан суднине ҫунтарса янӑ.

* * *

Гитлеровецсем Австри хулисемпе ялӗсенче пурӑнакан халӑха каялла чакакан нимӗҫ ҫарӗсемпе пӗрле куҫарса кайма питӗ тӑрӑшнӑ. Мирлӗ халӑха хӑратас шутпа нимӗҫсем Хӗрлӗ Ҫар ҫинчен тискер сӑмахсем сарнӑ. Анчах та нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем ҫапла тӑрӑшни пӗр усӑсӑр путланса ларнӑ. Австри хулисемпе ялӗсенче пурӑнакан халӑхӑн ытларах пайӗ вырӑнтах юлать. Гайнбург хулинчен фашистсен организацийӗсене ертсе пынӑ ҫынсем тата Австрие ӑна Германи ҫарӗсем оккупациленӗ хыҫҫӑн пырса вырнаҫнӑ нимӗҫсем анчах тухса тарнӑ. Нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем Гайнбургри пур арҫынсене те фольксштурм ҫарне мобилизациленӗ. Совет чаҫӗсем Гайнбург хули патне ҫитсен, ҫав ҫарти австриецсем пурте Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ.

Брук хулинчи ҫынсем урӑх ҫӗре куҫса кайма килӗшмен. Нимӗҫ ҫарӗсем Австрие йышӑниччен Брук хулин бургомистрӗ пулнӑ Леопольд Хальтер ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Брук хулине Хӗрлӗ Ҫар йышӑничченех темиҫе кун маларах хулара демонстраци пулса иртрӗ. Хула управленин ҫурчӗ умӗнче пин ҫын ытла пухӑнчӗҫ, вӗсем, шурӑ тутӑрсемпе сулла-сулла, хулари влаҫсенчен ҫав хулана пӗр ҫапӑҫусӑр Хӗрлӗ Ҫара пама ыйтрӗҫ. Демонстрантсене хула коменданчӗ Мюллер подполковник эсэсовецсен тата жандармсен отрячӗсем пулӑшнипе кӑна салатса яма пултарчӗ». Франц Краковер железнодорожник ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Эпир Хӗрлӗ Ҫар кунта килнӗшӗн савӑнатпӑр, пире фашистла нимӗҫсен пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларнӑшӑн, ӑна тав тӑватпӑр. Кашни австриец ют ҫӗршывсене пӑхӑнмасӑр пурӑнакан демократиллӗ Австри ҫӗнӗрен пулса тӑрасси ҫинчен шухӑшлать».

И. В. Сталин юлташ Мускаври тата пӗтӗм Руҫри Алексий патриархпа калаҫни

Апрелӗн 10-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ Православи чиркӗвӗн ӗҫӗсем ҫинчен Мускаври тата Пӗтӗм Руҫри Алексий Патриархпа калаҫнӑ. Калаҫнӑ вӑхӑтра Крутицки Митрополит Николай тата Протопресвитер Николай Колчицкий пулнӑ.

Калаҫӑва СССР Совнарком Председателӗн Заместителӗ В. М. Молотов юлташ хутшӑннӑ.

Выигрышсен вылявӗ

Иккӗмӗш Пятилетка Заемӗн (тӑваттӑмӗш ҫулхи кӑларӑмӗн) тата СССР Оборонине Ҫирӗплетмелли Заемӑн вылявӗсем пулса иртнӗ.

3.000-шер тенкӗлӗх выигрышсем Иккӗмӗш Пятилетка Заемӗн (тӑваттӑмӗш ҫулхи кӑларӑмӗн) вылявӗнче мӗнпур 200 разрядри 06954-мӗш серин 13-мӗш номерлӗ облигацийӗсем ҫине тухнӑ. СССР Оборонине Ҫирӗплетмелли Заемӑн вылявӗнче мӗнпур 53 разрядри 36889-мӗш серин 01-мӗш номерлӗ облигацийӗ ҫине тухнӑ. (ТАСС).

КОЛХОЗНИКСЕМ ВАЛЛИ ЛЕКЦИСЕМ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. ВКП(б) райкомӗ колхозниксем хушшинче ӑслӑлӑх темисемпе лекцисем тата докладсем ирттерет. Нумаях пулмасть учительница Л. К. Боброва юлташ «Этемлӗх пуҫланса кайни ҫинчен» Красноармейски ял Советне кӗрекен колхозсенче тата районри агитколлектив руководителӗсемпе вулав ҫурт заведующийӗсен районри семинарӗнче лекци вуласа панӑ. Пропагандист Н. Петров юлташ «Бактерисем тата вӗсен уссипе сиенӗсем ҫинчен», ВКП(б) райкомӗн агитаципе пропаганда отделӗн заведующийӗ М. Петров юлташ «Ҫутҫанталӑкӑн хӑрушӑ явленийӗсем ҫинчен» лекцисем вулама колхозсене кайнӑ.

Совет Союзӗпе Югослави хушшинче туслӑх, пӗр-пӗрне пулӑшасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси ҫинчен договор туса алӑ пусни

Югослави Министрсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал тата Югославин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ И. Шубашич господин Мускавра пурӑннӑ вӑхӑтра СССР Правительствипе Югослави Правительстви хушшинче калаҫусем пулса иртнӗ. Ҫав калаҫусем икӗ ҫӗршывӗ те, ытти пӗрлешнӗ нацисемпе пӗрле кӗрешсе гитлерла Германие хӑвӑртрах тата татӑклӑн ҫӗмӗрсе тӑкма хатӗр пулнине, ҫавӑн пекех тата икӗ ҫӗршывӑн халӑхӗсем хальхи вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта та туслӑха ҫирӗплетме тата пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлеме кӑмӑлланине кӑтартса панӑ.

Ҫав калаҫусем, пӗр-пӗрне чӗререн кӑмӑлласа пӗр-пӗрне ӑнланнипе пулса иртнӗскерсем. Совет Союзӗпе Югослави хушшинче туслӑх, пӗр-пӗрне пулӑшасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси ҫинчен апрелӗн 11-мӗшӗнче Договор туса алӑ пуснипе вӗҫленнӗ.

Договора Кремльте СССР Верховный Совет Президиумӗ хушнипе СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов тата Югославири Регентсен Совечӗ хушнипе Югослави Министрсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал алӑ пусна.

Договора алӑ пуснӑ чухне СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин пулнӑ.

Югослави енчен Договора алӑ пуснӑ чухне ҫаксем пулнӑ: Югославин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ И. Шубашич господин, Югославин ССР Союзӗнчи Посолӗ С. Симич господин, Черногори Ӗҫӗсен Министрӗ М. Джилас генерал-лейтенант, Суту-илӳпе снабжени Министрӗ Н. Петрович господин, Сӑрт-ту промышленность Министрӗ Б. Андреев господин, Югославин ССР Союзӗнчи Ҫар Миссийӗн Начальникӗ Р. Приморац генерал-лейтенант, Р. Николаевич господин, Шепич господин пулнӑ.

Совет Союзӗ енчен ҫаксем пулнӑ: Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский, ССР Союзӗн Югославири Посолӗ И. В. Садчиков, СССР Наркоминделӗн 4-мӗш Европа Отделӗн Заведующийӗ А. А. Лаврищев, Совет Союзӗн Югославири Ҫар Миссийӗн Начальникӗ А. Ф. Кисилев генерал-майор, С. Т. Базаров пулнӑ.

Договора алӑ пуснӑ хыҫҫӑн В. М. Молотов тата И. Броз-Тито Маршал сӑмахсем каланӑ.

Аяларахра Договор текстне пичетлетпӗр.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе Югослави хушшинче туслӑх, пӗр-пӗрне пулӑшасси тата вӑрҫӑ хыҫҫӑн пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси ҫинчен тунӑ ДОГОВОР

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗ тата Югославири Регентсен Совечӗ,

нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан вӑрҫа татӑклӑнах вӗҫне ҫитерме йышӑнса;

пӗрлехи тӑшмана—гитлерла Германие хирӗҫ пӗрле кӗрешекен Совет Союзӗпе Югослави халӑхӗсем хушшинчи туслӑха татах та ытларах ҫирӗплетес тесе;

икӗ ҫӗршывӗн халӑхӗсем те тата мӗнпур Пӗрлешнӗ нацисем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тата мирлӗ вӑхӑтра пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑнса килӗштерсе ӗҫлемелле тума, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи мирпе хӑрушсӑрлӑх организацине тӑвас ӗҫе хӑйсен тӳпине хывма ҫирӗп кӑмӑл пуррине палӑртса;

Совет Союзӗпе Югослави хушшинчи туслӑха ҫирӗплетни икӗ халӑхӑн пурнӑҫ интересӗсемпе килӗшсе тӑнине тата икӗ ҫӗршывне те экономика тӗлӗшпе малалла аталантарса пырас ӗҫе пысӑк усӑ паннине шанса тӑрса;

ҫӳлте каланӑ тӗллеве шута илсе, ҫак Договора туса йӗркелеме йышӑнчӗҫ тата хӑйсен уполномоченнӑйӗсем пулма ҫаксене уйӑрчӗҫ:

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗ—Вячеслав Михайлович **Молотова**, ССР Союзӗн Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарне;

Югославири Регентсен Совечӗ — Иосип **Броз-Тито** Маршала, Югослави Министрсен Совечӗн Председательне.

Уйӑрнӑ уполномоченнӑйсем, хӑйсен полномочийӗсем ҫинчен пӗр-пӗрне пӗлтерсе вӑл полномочисене тивӗҫлипе йӗркелесе панине палӑртнӑ хыҫҫӑн, ҫакӑн пирки каласса татӑлнӑ:

1-мӗш статья.

Калаҫса татӑлакан кашни Аслӑ Енӗ, тепӗр енӗпе тата мӗнпур Пӗрлешнӗ нацисемпе пӗрле кӗрешсе, Германие татӑклӑн ҫӗнтеричченех ҫапӑҫать. Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсем ҫак кӗрешӳре пӗр-пӗрне вӑрҫӑ вӑрҫас тата ытти тӗлӗшпе хӑйсен мӗнпур майӗсемпе усӑ курса пулӑшма пулаҫҫӗ.

2-мӗш статья.

Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсенчен пӗрин вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта Германи хӑйӗн агрессиллӗ политикине тепӗр хут ҫӗкленине пула вӑрҫӑ ӗҫне ирӗксӗрех хутшӑнмалла пулас пулсан е тата Германипе тӳрремӗнех е мӗнле те пулин урӑх майпа пӗрлешсе вӑрҫӑ пуҫласа янӑ мӗнле те пулин урӑх государствӑпа вӑрҫмалла пулас пулсан, Калаҫса татӑлакан тепӗр Аслӑ Енӗ вӑрҫа хутшӑннӑ Енне вӑрҫӑ ӗҫӗсенче тата ытти ӗҫре хӑйӗн мӗнпур майӗсемпе усӑ курса ҫийӗнчех пулӑшу парать.

3-мӗш статья.

Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсем ҫапла пӗлтереҫҫӗ: вӗсем, пӗр-пӗринпе чӗререн килӗштерсе ӗҫлес майпа, халӑхсен мирӗпе хӑрушсӑрлӑхне сыхласа усрас тӗлӗшпе пӗтӗм тӗнчере тӑвакан пур ӗҫсене те хутшӑнӗҫ тата ҫав аслӑ тӗллевсене пурнӑҫа кӗртес ӗҫе хӑйсен тӳпине пӗтӗмӗшпех хывӗҫ.

Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсем ҫапла пӗлтереҫҫӗ: ҫак Договорпа усӑ курасси пӗтӗм тӗнчери принципсемпе, вӗсене йышӑннӑ чухне ҫак калаҫса татӑлакан ҫӗршывсем пулнӑ пулсан, пӗтӗмӗшпех килӗшсе тӑрӗ.

4-мӗш статья.

Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсенчен кашниех Калаҫса татӑлакан тепӗр Аслӑ Енне хирӗҫ пыракан кирек те мӗнле килӗшӳсем тумӑп тесе тата ӑна хирӗҫ пыракан мӗнле те пулин коалицие хутшӑнмӑп тесе сӑмах парать.

5-мӗш статья.

Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсем ҫапла пӗлтереҫҫӗ: ҫак ҫӗршывӑн халӑхӗсем хушшинчи экономикӑллӑ тата культурӑллӑ ҫыхӑнусене малалла аталантарса пырас тата тӗреклетес шутпа, вӗсем хальхи вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн та пӗр-пӗринпе туслӑн тата килӗштерсе ӗҫлӗҫ.

6-мӗш статья.

Ҫак Договор ӑна алӑ пуснӑ хыҫҫӑн ҫийӗнчех вӑя кӗрет тата ӑна май пур таран кӗске срокра ратификацилемелле. Ратификаци грамотисене Белград хулинче май пур таран хӑвӑртрах улӑштарса илеҫҫӗ.

Ҫак Договор ӑна алӑ пуснӑ хыҫҫӑн 20 ҫул хушши вӑйра пулать. Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсенчен пӗри ҫак ҫирӗм ҫуллӑ тапхӑр вӗҫӗнче срок тухиччен пӗр ҫул малтан Договора пӑрахӑҫа кӑларма кӑмӑлланни ҫинчен пӗлтермесен, Договор малашнехи пилӗк ҫуллӑха вӑйра юлать, ҫапла вара, Калаҫса татӑлакан Аслӑ Енсенчен пӗри пилӗк ҫуллӑх срок тухиччен пӗр ҫул малтан Договора пӑрахӑҫа каларасси ҫинчен ҫыру ҫырса асӑрхаттармасан, Договор кун хыҫҫӑн та татах пилӗкшер ҫуллӑха вӑйра юлса пырать.

Ҫакна ҫирӗплетсе, уполномоченнӑйсем ҫак Договор ҫине алӑ пуснӑ тата хӑйсен пичечӗсене хунӑ.

Договора Мускав хулинче, 1945 ҫулхи апрелӗн 11-мӗшӗнче, икӗ экземпляр ҫырса хатӗрленӗ, кашниех вырӑс чӗлхипе тата сербипе хорват чӗлхипе ҫырнӑ. Вӗсенчен икӗ текслӗ те пӗр пекех вӑйра пулаҫҫӗ.

СССР Верховный Совет Президиумӗ хушнипе
В. М. МОЛОТОВ.

Югославири Регентсен Совечӗ хушнипе
И. БРОЗ-ТИТО.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин Югослави Министрсен Совечӗн Председательне И. Броз-Тито Маршала йышӑнни

Апрелӗн 11-мӗшӗнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин Югослави Министрсен Совечӗн Председательне И. Броз-Тито Маршала йышӑннӑ.

Йышӑнура СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. Ф. Горкин пулнӑ.

Югослави Министрсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал ячӗпе СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин патӗнче пулнӑ апатлану

Апрелӗн 11-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Югослави Министрсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал ячӗпе Кремльте апатлану туса ирттернӗ.

Апатланура И. Броз-Тито Маршал, Югославин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ И. Шубашич господин, Югославин ССР Союзӗнчи Посолӗ С. Симич господин, Черногори Ӗҫӗсен Министрӗ М. Джилас генерал-лейтенант, Суту-илӳпе снабжени министрӗ Н. Петрович господин, Сӑрт-ту промышленность Министрӗ Б. Андреев господин, Югославин ССР Союзӗнчи Ҫар Миссийӗн Начальникӗ Р. Приморац генерал-лейтенант, ҫавӑн пекех тата Тито Маршалпа пӗрле килнӗ ҫынсемпе Югославин ССР Союзӗнчи посольствин членӗсем пулнӑ.

Совет Союзӗ енчен ҫаксем пулнӑ: М. И. Калинин, В. М. Молотов, А. И. Микоян, Л. П. Берия, Г. Маленков, Л. М. Каганович, Н. М. Шверник, Н. А. Вознесенский, Н. А. Булганин, А. Н. Косыгин, Флот адмиралӗ Н. Г. Кузнецов, А. И. Шахурин, Б. Л. Ванников, Д. Ф. Устинов, В. А. Малышев, А. Г. Зверев, А. Я. Вышинский, ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав Совечӗн исполком Председателӗ Г. М. Попов, ВЦСПС Председателӗ В. В. Кузнецов, Артиллерин главнӑй Маршалӗ Н. Н. Воронов, Арми генералӗ А. И. Антонов, ССР Союзӗн Югославири Посолӗ И. В. Садчиков, авиаци Маршалӗ Ф. Я. Фалалеев, РСФСР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ А. И. Лаврентьев, УССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ Д. З. Мануильский, Арми генералӗ А. В. Хрулев, генерал-полковник Ф. И. Голиков, генерал-полковник Б. М. Коробков, СССР Наркоминделӗн 4-мӗш Европа Отделӗн Заведующийӗ А. А. Лаврищев, П. И. Пальгунов, СССР Наркоминделӗн Протокол Отделӗн Заведующийӗ Ф. Ф. Молочков, генерал-лейтенант А. С. Гундоров, Совет Союзӗн Югославири Ҫар Миссийӗн Начальникӗ А. Ф. Киселев генерал-майор, М. П. Кутузов генерал-майор тата ыттисем те.

Апатлану туслӑ лару-тӑрура иртнӗ, совет деятелӗсемпе Югославирен килнӗ хӑнасем пӗр-пӗринпе кӑмӑллӑн калаҫнӑ.

И. Броз-Тито Маршал Мускав хулинчи промышленность предприятийӗсене пӑхса ҫӳрени

Югослави Министерсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал тата унпа пӗрле килнӗ ҫынсем апрелӗн 9-мӗшӗнче оборона завочӗсенчен пӗринче пулнӑ. Вӑл завод 18 уйӑх хушши ӗнтӗ Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тытса тӑрать.

Броз-Тито Маршал предприяти ӗҫӗсемпе тӗплӗн паллашнӑ, пуринчен ытла конвейер линийӗсене тимлӗн пӑхса тухнӑ. Производствӑн кӑткӑс специальноҫӗсене кӗске вӑхӑт хушшинчех вӗренсе алла илнӗ ҫамрӑк рабочисен ӗҫӗсене ырланӑ.

Пур цехсенче те рабочисем Броз-Тито Маршала ӑшшӑн йышӑннӑ.

Апрелӗн 10-мӗшӗнче Броз-Тито Маршал, Югославин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ И. Шубашич господин тата вӗсемпе пӗрле килнӗ ҫынсем Сталин ячӗпе тӑракан автозавода пӑхса ҫӳренӗ.

Завод директорӗ И. В. Лихачев хӑнасене производствӑн тӗп цехӗсемпе паллаштарнӑ. Броз-Тито Маршал автомобильсем пухакан цехра тӗп конвейер ҫинче машина пулса тухнине сӑнанӑ. (ТАСС).

БАШКИРИРЕ НЕФТЬ ТУХАКАН ҪӖНӖ ВЫРӐН ТУПНА

Макаровски районри Салихово ялӗ патӗнче нефть шырама чавнӑ шӑтӑка сӑнанӑ чухне нефть вӑйлӑ сирпӗнме пуҫланӑ. Пушкӑрт республикинчи нефть трестӗ, ҫав вырӑнта нефть шырас ӗҫе хӑвӑртрах вӗҫлесе, ҫӗнӗ нефть вырӑнӗпе усӑ курмашкӑн тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнать.

ВКП(б) Обкомĕнче
Колхозри пуçламĕш парторганизаци ĕçĕсем çинчен

Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри пуçламĕш парторганизаци ĕçĕсем çинчен отчет итлерĕ.

«Динамо» колхоз — Куславкка районĕнчи пысăк колхозсенчен пĕри. Вăл 220 хуçалăхран тăрать. 973 гектар çĕр тытать. Колхозра 6 бригада тата 4 выльăх-чĕрлĕх фермийĕ пур. Колхозри пуçламĕш парторганизаци Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи хăйĕн задачисене лайăх ăнланса илнĕ. Вăл, партиллĕ-политикăллă ĕçе кирлĕ пек туса пырса, иртнĕ çулта ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлеме пулăшнă, çитес çуракине те начар мар хатĕрленет. Парторганизаци колхозри кашни ĕçех хутшăнать, колхоз правленийĕн ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăрать.

Парторганизаци çапла ертсе пынипе пула, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçленипе пула, ялхуçалăх артелĕ 1944 çулта вăйлă тырпул туса илнĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 15,98 центнер тĕштырă пухнă. Уйрăм культурăсен тухăçĕ унтан та вăйлăрах пулнă. Сăмахран, урпа 29,25 центнер, сĕлĕ—21,68 центнер туса илнĕ. Агеева юлташ ертсе пыракан 3-мĕш номерлĕ бригадăн кашни гектартан вăтам шутпа 17,95 центнер тырпул тухнă. Колхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хăйĕн обязательствине срокчен тултарнă. Государствăна 1469 центнер тырпул, 77 центнер аш-какай тата 15.000 литра ыхан сĕт панă. Кунсăр пуçне, планран ирттерсе, Хĕрлĕ Çарăн фондне 240 пăт тырпул, 180 пăт ытла аш-какай тата ытти продуктсем панă.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçланă хыççăн, вăрлăх фондне тата ытти фондсене, хывса хăварнă хыççăн, колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх сахал мар тырпул валеçсе панă. Кашни ĕçкунĕ пуçне 2,3 килограмм тĕштырă, 4 килограмм çĕрулми тата ытти продуктсем валеçнĕ. Колхозниксене 436 центнер тырпул ĕçшĕн хушса тўленĕ.

Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн тата ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пынăшăн колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе те начар мар йĕркеленĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă. Вĕсене тăрантарма апат-çимĕç çителĕклĕ, выльăхсене лайăх пăхса усраççĕ.

Колхоз çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ: вăрлăхсене сортласа тасатнă, ялхуçалăх машинисене те юсаса çитернĕ. Уйхирне 5.156 лав тислĕк, 150 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăларнă, 177 центнер кĕл пухнă. Кĕрхи çĕртме тумалли плана пĕтĕмпех тултарнă. 16 вăкăра кўлсе çўреме вĕрентнĕ.

Колхоза хуçалăх енчен çирĕплетме парторганизаци партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçсене лайăх туса пыни пулăшнă. Парторганизаци коммунистсен пухăвĕсене тăтăшах ирттерет, вăл пухусенче партипе правительствăн решенийĕсене вăхăтра сўтсе-явать, решенисене сўтсе-явнă çĕре коммунистсем активлăн хутшăнаççĕ. Парти организацийĕ колхоз активĕпе те начар мар ĕçлет. 1944 çулта парти ретне 6 çынна илнĕ. Пур коммунистсене те ĕç панă, коммунистсем политшкулăн занятийĕсене йĕркеллĕ çўреççĕ. Парторганизаци çумĕнче агитколлектив пур, вăл 11 çынран тăрать. Агитаторсем хăйсене çирĕплетсе панă бригадăсенче калаçусем, информацисем тăтăшах ирттереççĕ, хаçат-журналсем вуласа параççĕ.

Колхоз правленийĕнче, ял Советĕнче колхозниксене Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшас тĕлĕшпе вăя шеллемесĕр ĕçлеме чĕнсе калакан лозунгсемпе плакатсем çырса çапнă, «Чăваш Коммуни» хаçатăн витринине тунă, кăтарту хăми пур. Çав кăтарту хăми çине уйхир бригадисем мĕнле ĕçлесе пынине çырсах тăраççĕ. Колхозри стена хаçачĕ пĕрмаях тухса тăрать, хаçатра лайăх ĕçлекен колхозниксем çинчен çырсах тăраççĕ.

Колхозра художествăллă пултарулăх ĕçне те йĕркеленĕ. Драмкружок пур, вăл 1944—45 çулсенче 7 спектакль лартса панă. Тулли мар вăтам шкул çумĕнче хор кружокĕ, шумовой оркестр ĕçлет. Художествăллă пултарулăха колхозăн 400 çын вырнаçакан клубĕнче кăтартаççĕ.

Партин пуçламĕш организацийĕ фронтовиксен çемьисемпе ашшĕ-амăшĕсемсĕр юлнă ачасене вутă, апат-çимĕç тата выльăх апачĕ парса пулăшнă. Вĕсене ăшă япаласемпе укçа пухса панă. Пухнă укçапа 50 метр мануфактура, 13 ача валли кĕпе-йĕм илнĕ, 10 килограмм çăм пухса панă. Вĕсемсĕр пуçне тата 2 сурăх, 3 пăру туянтарнă. Колхозран пĕтĕмпе 5.071 килограмм тырă панă.

Анчах та ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак колхозри парторганизаци ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине те палăртса хăварчĕ. Чи малтанах, колхоза пур енĕпе те аталанса пымалла тăвайман-ха. Уйрăмах сад-пахчи ĕçĕ çине, хурт хăмăр тата пурçăн хурчĕ ĕрчетесси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Кайăк-кĕшĕк фермине халиччен те организацилемен. Парти организацийĕ колхозниксем хушшинчи партиллĕ-организациллĕ ĕçе тата вĕсене воспитани парас ĕçе çителĕксĕр туса пырать. Парти пухăвĕсен решенийĕсем уçăмлă мар, решенисем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Парторганизаци колхозри комсомол организацине те кирлĕ пек ертсе пымасть. Комсомолецсем колхоз ĕçне начар хутшăнаççĕ, комсомолецсен союзри ĕçне япăхтарса янă.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ хăйĕн решенийĕнче пуçламĕш парторганизаци секретарьне Петров юлташа малта асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ. Парторганизацин СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановлени тата ВКП(б) Обкомĕн XXI-мĕш пленумĕн решенийĕсене тĕпе хурса ĕçлемелле. Колхозниксене çуракине лайăх пахалăхпа тата агротехника хушнă срокра ирттерме, 1945 çулта тырпул тухăçне ўстерессишĕн кĕрешме мобилизацилемелле. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ парторганизацие колхоз хуçалăхне тĕплĕнрех хутшăнма, ăна пур енчен те аталантарма, çак тĕлĕшпе хурт-хăмăр, пурçăн хурчĕ ĕрчетме, сад-пахчи ĕçне вăйлатма хушса хăварчĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пуçламĕш парторганизаци секретарьне çуракине тухиччен коммунистсемпе комсомолецсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухма хушрĕ. Уйрăмах акакансем, вăрлăх турттаракансем пулса ĕçлеме пултаруллă та тўрĕ кăмăллă çынсене çирĕплетмелле, çавăн пекех уйхир бригадисене тĕрĕслесе тухмалла, вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх звеносем тумалла, вĕсем çумне çĕр лаптăкĕ, ялхуçалăх культурисемпе инвентарьсем çирĕплетсе памалла. Çуракинче уйрăм сдельщинăпа ĕçлессине лайăх йĕркелемелле. Тырпулсене нормăпа кăтартнă пек акмалла, кĕрхи калчасене сўремелле, кĕр калчисене апат памалла тата çумкурăкĕсенчен тасатса тăмалла, çуртыррисене лайăх пăхса ўстермелле.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пуçламĕш парторганизацине туртăм вăйне çуракине лайăх хатĕрлесе çитерме хушрĕ. Ĕçлеме пултаракан лашасемпе вăкăрсене колхозниксем çумне çирĕплетсе памалла, вĕсене лайăх апат çине тăратмалла. Лашасем мĕнлине тĕрĕслесе тухмалла, начаррисене уйрăмăн пăхмалла. Кўлмелли япаласемпе ут таврашсене юсаса хумалла, конюхсене лашасем мĕнлине кура тўлемелле.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пуçламĕш парторганизацие партиллĕ-политикăллă ĕçе тата партин шалти ĕçне лайăхлатма, парти пухăвĕсене малтанах тĕплĕн хатĕрленсе активлăн ирттерме, пухусен решенийĕсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине пĕрмаях тĕрĕслесе тăма, çамрăк коммунистсене вĕрентсе ўстерес ĕçе вăйлатма сĕнчĕ. Çавăн пекех колхозниксем хушшинче ĕçлессине вăйлатмалла, вĕсене фронтри çĕнĕ хыпарсем çинчен тата тĕнчери лару-тăру çинчен тăтăшах пĕлтерсе тăмалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пуçламĕш парторганизаци секретарьне Петров юлташа колхозри комсомол организаци ĕçне чĕртсе ярас тĕлĕшпе тимлĕнрех ĕçлеме хушса хăварчĕ. Уйрăмах комсомолецсен йышне ўстерессишĕн тăрăшмалла, комсомолецсене колхозри кирлĕрех ĕçсене вырнаçтарса тухмалла, вĕсем унта мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăмалла. Колхозри политикăллă çутĕç ĕçне тĕпренех лайăхлатас тесе, вулав çурчĕн ĕçне чĕртсе ямалла, унта колхозниксене агротехникăна вĕрентмелле.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ партин Куславкка райкомĕн секретарьне Крючков юлташа «Динамо» колхозри пуçламĕш парторганизацин ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ăна тăтăшах пулăшса тăма хушрĕ.

Канаш станцийĕ мала тухрĕ

КАНАШ. Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан ăмăртура чугун çул работникĕсем çĕнĕ çитĕнўсем тăваççĕ. Март уйăхĕнчи ĕçсен итогĕсем тăрăх Канаш станцийĕ Хусан чугун çулĕ çинче пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Иртнĕ уйăхра уйрăмах маневр диспетчерĕ Иванов юлташăн смени лайăх ĕçлерĕ. Вăл смена поездсене расписани тăрăх ăсатса тăчĕ, транзитлă вагонсем станцăра тăрассине чакарчĕ, грузсем тиесе пушатмалли плансене ирттерсе тултарчĕ.

Составсем пухса йĕркелекен бригадăсенчен М. Данилов юлташăн бригади мала тухрĕ. Бригада хăйĕн ĕç нормине 140 процент тултарчĕ. Поездсене 70 минутра пухса йĕркелес вырăнне 56 минутрах пухса йĕркелесе пычĕ.

Иванов сменипе Данилов бригади иртнĕ уйăхра тунă çитĕнўсемпе лăпланса ларма шутламаççĕ. Вĕсем апрель уйăхĕнче татах та лайăхрах ĕçлеме пулса çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

А. КУЗНЕЦОВ,
Станцири партбюро секретарĕ.
В. МАРТЫНОВ.
Станци инженерĕ.

ÇУРАКИ УМĔН

Клевер акаççĕ

ИШЛЕЙ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри уйрăм колхозсем клевер акма тытăннă. «Эстафета» колхоз 8 гектар, «Чăваш Коммуни» колхоз 10 гектар, Водопьянов тата Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсем кашниех 6-шар гектар клевер акнă.

В. ГУСЬКОВ.

* * *

КУСЛАВККА, апрелĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те çуракн умĕнхи ĕçсене пуçăнчĕç. Халĕ 18 колхозра клевер акаççĕ. «Красная Чувашия» колхоз 22 гектар, Партин 16-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз 20 гектар, Киров ячĕпе тăракан колхоз 48 гектар, «Правда» колхоз 25 гектар акнă, районĕпе 157 гектар клевер акнă.

«Коммунар» колхоз 5 гектар çинчи кĕрхи тырăсене мульчировани тунă, 25 гектар çинчи тырра апатлантарнă. «III Интернационал» колхоз 30 центнер çĕрулмине яровизацилеме хунă. Çĕрулмине яровизацилес ĕç ытти колхозсенче те пырать.

М. ОГОРОДНИКОВ.

* * *

Шупашкар районĕнчи «11 лет Октября» колхоз 30 гектар, «Красный герой» колхоз 12 гектар, «Кормилец» колхоз 10 гектар, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 11,25 гектар, Крупская ячĕпе тăракан колхоз 19 гектар, районĕпе пурĕ 210 гектар клевер акнă.

Нумай колхозсем çĕрулмине яровизацилеме тытăннă. Паянхи кун тĕлне районĕпе 510 центнер çĕрулми яровизацилеме хунă.

* * *

МУРКАШ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Кашмашри «Свобода» колхоз паянхи кун тĕлне 60 гектар клевер акрĕ. «Крестьянин» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем кашниех 10 гектар клевер акнă. Клевер акас ĕç ытти колхозсенче те пуçланчĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Кĕрхи тырăсене апатлантараççĕ

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Малта пыракан колхозсем çуракине тухас умĕнхи ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ. Халĕ районра кĕрхи тырăсене апатлантарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. «Звезда» колхоз çак кунсенче 21 гектар çинчи кĕрхи тырăсене çĕрнĕ тислĕкпе апатлантарчĕ. Уйрăм вырăнсенче юр нумай выртать, ыраш калчи çĕресрен сыхланас майпа колхозниксем юр купине салатаççĕ.

«Спутник колхозника» колхозра 32 гектар, «Новый быт» колхозра 39 гектар, «Коминтерн» колхозра 44 гектар çинчи кĕрхи тырăсене апатлантарнă. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх паянхи кун тĕлне 543 гектар çинчи кĕрхи тырăсене апатлантарнă.

Районри 81 колхозран 58-шĕнче клевер акма тухнă. Пурĕ районĕпе ыраш çине 691 гектар клевер акнă.

Пур колхозсенче те çĕрулмине яровизацилеме тытăннă. Районĕпе 3750 центнер çĕрулми яровизацилеме хывнă.

Кашни колхозрах çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслес майпа хире плугсем, сўресем, сеялкăсем кўлсе тухаççĕ. Нумай колхозсем çуракине тухма пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

М. ДМИТРИЕВ,
Районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Лохвица МТС коллективĕн чĕнĕвне ырлаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Полтава облаçĕнчи Лохвица МТС коллективĕ вăйлă тырпул туса илессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва сарса яма чĕнсе çырнине Красноармейски МТС-чи трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсемпе машинистсем тата техниксемпе рабочисем хăйсен пухăвĕнче сўтсе-яврĕç. Çак чĕнĕве ырласа, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма йышăнчĕç тата конкретлă обязательствăсем илчĕç.

Кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 400 гектартан кая мар сухаламалла, ĕçĕн пахалăхĕ лайăх пулмалла; тракторсемпе ĕçленĕ вăхăтра горючине тата сĕрмелли япаласене 5 процент перекетлемелле.

Çураки планне 150 процентран кая мар пурнăçламалла.

Кашни комбайнпа вăтам шутпа 130 гектартан кая мар пухмалла, ĕç пахалăхĕ лайăх пулмалла, тăкаксем тумалла мар. МК-1100 молотилкăпа 400 тоннăран кая мар çапмалла. Машинăсене техника енчен вăхăтра тата лайăх пăхса тăмалла.

Паллă тракторист И. Титов юлташ хăйĕн тракторĕпе çулталăкра 600 гектар, М. Терентьева тата С. Иванова трактористкăсем кашниех 550 гектар сухалама, 10 процент таран горючи перекетлесе хăварма пулчĕç. Тракторсем çуракине хатĕррине тепĕр хут тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн, трактор бригадисем хăйсен ĕçлемелли вырăнĕсене тухса карĕç. Карайри, Ямапакри, Хусаккассинчи, Исаковăри тата Красноармейски колхозсенче ĕçлекен трактор бригадисем хăйсен ĕçлемелли вырăнĕсене çитнĕ. Вĕсем çураки ĕçне тытăнма хатĕр.

Ив. ХАТАЕВСКИЙ.

Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен президенчĕ Франклин Рузвельт вилнĕ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. сехет те 35 минутра, Уорм Спрингсра сехет те 35 минутра, Уорм Спирингсра (Георги штачĕ) Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен Президенчĕ Франклин Делано Рузвельт вилсе кайнă. Вăл пуç мимине юн юхса тулнипе пула вилнĕ.

ВАШИНГТОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен Президенчĕн резиденцийĕ) çапла пĕлтернĕ: Рузвельта шăматкун кăнтăрла иртсен Вашингтонра асăнса чыслаççĕ. Пытарасса ăна вырсарникун кăнтăрла иртсен Гайд-паркра пытараççĕ.

Шурă Çурт çапла каланă: США вице-президентне Трумэна Шурă Çурта чĕннĕ те миссис Элеонора Рузвельт ăна Рузвельт вилни çинчен пĕлтернĕ. Çавăн çинченех государство секретарьне Стеттиниуса та пĕлтернĕ. Унтан кабинет ларăвне пухнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерўре каланă тăрăх, союзниксен çарĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăрса кĕрешнине çĕнтерсе, Голландири Девентер хулине йышăннă. Союзниксен çарĕсем халĕ Брауншвейг хулинчен 8 километрта кăна тăраççĕ. Ганноверпа Брауншвейг хулисем хушшинчи автострадăна çав икĕ хула хушшинчи çурма çулта татнă.

Артиллери вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, союзниксен çарĕсем Швейнфурт хулине виçĕ енчен хупăрласа илнĕ. Союзниксен Швейнфурт хули çине кăнтăр енчен тапăнса пыракан бронетанковăй чаçĕсем Майн шывĕ хĕрринче 24 километр тăршшĕ участок тытса илнĕ.

Рур «михĕн» районĕнче союзниксен çарĕсем Рур шывĕ еннелле кăнтăралла куçнă. Эссен хулинчен хĕвелтухăçнерехри пункт патне çитнĕ, Дортмунд хулинчен хĕвеланăçнерехри темиçе пысăк мар хулана йышăннă. Дортмунд хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшманăн икĕ вăйлă контратакине сирсе янă.

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 9-мĕш армийĕн пехотăпа танковăй чаçĕсем Брауншвейг хулишĕн çапăçма пуçланă.

Ганноверпа Бремен хушшинче нимĕç çарĕсем хирĕç тăрса кĕрешни арканса пырать. Союзниксен çарĕсем пĕр чарăнмасăр тенĕ пекех малалла наступлени туса пыраççĕ.

«Михĕ» ăшĕнче американецсен 17-мĕш дивизийĕ Эссен хулине йышăннă. Нимĕçсем кăшт кăна хирĕç тăрса çапăçнă. Çавăн пекех Ганновер хулине те йышăннă. Çар корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, çав хулашăн танковăй чаçсемсĕр пуçне американецсен пехотин 200 çынтан тăракан роти çапăçнă.

Ганновер хулине йышăнас умĕн союзниксен çарĕсем Çурçĕр-хĕвеланăç тата Вăтам Германире питĕ хăвăрт малалла куçса пынă. Нумай хуласенчи халăх хăйсен хулисене союзниксем пырса кĕрессине пĕртте кĕтмен. Танковăй чаçсем унта сасартăк пыра-пыра кĕнĕ, вĕсем хыççăн вара хулана пехота пырса кĕнĕ. Союзниксен танкĕсем час-часах хуласенче чарăнмасăрах малалла каяççĕ. Çакăн хыççăн хулана пехота йышăнать те ăна союзниксен çар администрацийĕ аллине парать.

Союзниксен хĕвеланăçĕнчи операцийĕсем
(ТАСС-ăн çар корреспондентĕнчен)

ÇУРÇĔР ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИ, апрелĕн 8-мĕшĕ. Оснабрюк хулине апрелĕн 4-мĕшĕнче йышăннă. Апрелĕн 5-мĕшĕнче союзниксен малти чаçĕсем, Везер шывĕ хĕррине çитсе, Минден хулине йышăннă. Минден хули Оснабрюкпа Ганновер хулисем хушшинче çурма çулта ларать. Союзниксен наступлени туса пыракан çарĕсем питĕ хăвăрт куçса пыраççĕ, кун каçиччен 32-шер километр каяççĕ. Ку таранччен союзниксене япăх кĕперсем тата пит мала кайнă колоннăсем валли горючи çитменни кăна чăрмантарса тăрать. Нимĕçсем çул юпписенче кăна хирĕç тăркалаççĕ тата вĕсен снайперĕсем перкелеççĕ.

Нимĕçсен кунта нимĕнле оборона линийĕ те, нимĕнле фронт та, нимĕнле çар та çук.

Эпир наступлени туса пыракан çарсем Оснабрюк хулинчен хĕвелтухăçнелле каякан çул çинче кун каçиччен пултăмăр. Оснабрюк хули хыçĕнче, тăшмантан тасатса çитереймен çул çинче, эпир Германи салтакĕсен ушкăнне тĕл пултăмăр. Вĕсене офицер ертсе пырать. Вĕсем кирек кама та тыткăна парăнма хатĕр, анчах вĕсене никам та тыткăна илесшĕн мар. Пăртак малалла кайсан, эпир нимĕç салтакĕсен тепĕр ушкăнне куртăмăр, вĕсем пысăк шурă ялав çĕклесе пыраççĕ. Вĕсем те тыткăна парăнасшăн. Вĕсен умĕнче тата вĕсен хыçĕнче тыткăнра пулнă француз çыннисем, вырăс çыннисем, чуралăха хăваласа кайнă поляк хĕрĕсем, Голланди çамрăкĕсем пыраççĕ. Виссинген хули патĕнче эпир вăрман хушшипе пыракан çул çинелле сулахаялла пăрăнтăмăр. Кашни 15 минутран тенĕ пек е унтан та сахалтарах вăхăт хушшинче эпир хĕвеланăçнелле пĕр хуралсăр каякан нимĕç салтакĕсене тĕл пулатпăр. Пĕчĕк ял хĕрринче эпир союзлă çĕршывсен гражданĕсен пысăк ушкăнне тĕл пултăмăр. Вĕсем хушшинче тыткăна лекнĕ тата каторга ĕçне хăваласа кайнă вырăс çыннисем, тыткăна лекнĕ французсем, поляксем, голландецсем, словенсем, чехсем тата итальянецсем нумай. Вĕсем патĕнче нимĕç салтакĕсен ушкăнĕ ларать. Ирĕке тухнă çынсем савăнаççĕ. Союзниксен салтакĕсене вĕсем хĕрўллĕн тав тăваççĕ. Нимĕçсем союзниксен салтакĕсем çине пĕр чĕнмесĕр пичем мĕн пăхаççĕ. Минденран инçе мар вырăнта эпир тыткăна лекнĕ темиçе çĕр нимĕçе куртăмăр, вĕсем тыла яма грузовиксем тиетчĕç. Вĕсем пыракан хăшпĕр ялсенче нимĕçсем вĕсене саламлама хăтланаççĕ. Тыткăна лекнисем нимĕнле ответ та памаççĕ. Хăшпĕрисем вĕсене парăннăшăн ятлаççĕ. Тыткăна лекнисем вĕсене вăрçаççĕ.

Кунта нимĕнле вăрçă палли те çук. Хуласемпе ялсене пĕртте тĕкĕнмен. Хулари пурнăç халиччен пекех пырать. Çынсем урамсем тăрăх çўреççĕ, уйхирсенче ĕçлеççĕ. Апат-çимĕç магазинĕсем умĕнче пысăк черетсем тăраççĕ. Германи ăшнелле мĕн чухлĕ ытларах кĕретĕн, çапăçусем пулнин паллисем çавăн чухлĕ сахалтарах. Эпир фабрика патĕнчен иртсе каятпăр, вăл çаплах ĕçлет. Ун сывăхĕнчи пĕчĕк хулана нимĕн те тĕкĕнмен. Чугун çул вокзалĕ епле пулнă, çавăн пекех ларать. Союзниксен транспорт колоннисем çине нимĕçсем пит тĕлĕнсе пăхаççĕ, анчах мĕн пулса иртнине вĕсем пит лайăх пĕлеççĕ. Кашни çурт çинчех шурă ялав çакăнса тăрать. Хăйсене çĕнтернĕ хыççăн нимĕçсем пит мăнкăмăлланса тăмаççĕ. Вĕсем йăл кулаççĕ, пуç таяççĕ, хăшпĕр чухне мĕнпе те пулин пулăшма хăтланаççĕ. Вĕсем сехечĕ-сехечĕпе урамсенче тăраççĕ, союзниксен çарĕсем хĕвелтухăçнелле куçнине пăхса тăраççĕ.

Эпир Минден хули патне сывăхаратпăр. Минден хулине эпир çитиччен темиçе сехет кăна маларах тасатнă. Мирлĕ пурнăç, çапăçнине кăтартакан нимĕнле паллă та çук, çапăçу шавĕ те илтĕнмест. Сасартăк икĕ нимĕç истребителĕ курăнса кайрĕç. Вĕсем транспорт колонни çине тапăнма хăтланчĕç, анчах зениткăсем вăйлăн персе тăнине пула, пĕлĕтсем хушшине тарса çухалчĕç. Пурĕ те çакă çеç. Кун каçиччен эпир çав икĕ истребителе кăна куртăмăр, вĕсем нимĕçсем хирĕç тăнине пĕлтерекен пĕртен-пĕр паллă пулчĕç. Каялла тавăрăннă чухне эпир малалла куçса пыракан союзниксен çĕнĕ çарĕсене тĕл пултăмăр. Союзниксен çарĕсем çулсем май панă таран хăвăрт малалла куçса пыраççĕ.

НАЦИСТСЕМ ЫЛТТĂН ФОНДНЕ БЕРЛИНРАН ИЛСЕ ТУХСА КАЙНИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНРЕХХĔН ÇĔНĔРЕН ПĔЛТЕРНИ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Чикаго Сан» хаçатăн корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германин Рейхсбанк представителĕ Фик, американецсен кăмăлне çавăрас тесе пулмалла, çапла каланă: нацистсем ылттăн запасне Берлинран илсе тухни вăл запас вырăссен аллине мар, американецсен аллине лектĕр тенипе пулнă. Фик çапла каланă: тăвар кăлармалли шăтăксене пытарнă ылттăнпа укçана американецсен 3-мĕш армийĕ пыриччен илсе тухма пултарайманнине курсан, нацистла правительствăн представителĕсем çапла шутланă: американецсем çав ылттăн запасĕпе рейхсмаркăна йĕркелес тĕлĕшпе усă курĕç, тенĕ. Фик каланă тăрăх, американецсем, оккупаци влаçĕсем тунă пек, пĕр рейхсмаркăшăн 10 цент памалла тăвас пулсан, çавăн пекех пасарти хаксене çирĕп нормăпа йĕркелес пулсан, вĕсем вара укçа питĕ йўнелсе каяссинчен хăтарма пултараççĕ. Вăл каланă тăрăх, çапла тусассăн, вăрçă пĕтнĕ чухне Германи промышленноçĕн финанс никĕсĕ çирĕп пулать. Çакă вара Германин промышленноçпа суту-илў предприятийĕн акцийĕсене упраса хăварма май парать. Фик каланă тăрăх, ылттăна, укçа-тенке тата искусство произведенийĕсене Берлинран тăвар кăлармалли шăтăксене февралĕн 9-мĕшĕнче куçарма пуçланă, çав шăтăксем вĕсем Одер çинче тăракан Хĕрлĕ Çарпа Рейн çинче тăракан Англипе Америка çарĕсем хушшинче шап варринче тăраççĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

КОШИЦЕ, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 4-мĕшĕнче Чехословаки республикин президенчĕ доктор Э. Бенеш Чехословакин Я. Шрамек премьер-министр пулса ĕçленĕ правительствин членĕсене йышăннă. Йышăнура Я. Шрамек правительство вырăнтан тухни çинчен президента заявлени панă.

Бенеш президент çав кунах çĕнĕ правительство туса хунă. Чехословакин ирĕке кăларнă территорире тунă пĕрремĕш правительствин премьер-министрĕ—Зденек Фирлингер. Премьер-министрăн заместителĕсем: Иосиф Давид, Клемент Готвальд, Вилем Широкий, Ян Шрамек тата Ян Урсини, Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Ян Масарик, халăх оборонин министрĕ—генерал Людвик Свобода, шалти ĕçсен министрĕ—Вячеслав Носек, тулашри суту-илў министрĕ—Губерт Рипка, финанс министрĕ—Вавро Шробар, шкулсемпе çутĕç министрĕ—профессор Зденек Неедлы, юстици министрĕ — Ярослав Странский, информаци министрĕ—Вячеслав Копецкий, çĕрĕç министрĕ—Юлий Дюриш, промышленность министрĕ—Богумил Лаушман, шалти суту-илў министрĕ—Иван Пьетор, çулйĕр министрĕ—генерал Антонин Гасал, почта министрĕ—Франтишек Гала, ĕç сыхлавĕн тата социальнăй обеспечени министрĕ—Иосиф Шолтес, халăх сывлăх министрĕ—Адольф Прохазка, снабжени министрĕ—Вячеслав Майер.

Апрелĕн 5-мĕшĕнче Чехословакин çĕнĕ правительствин пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Чехословаки хаçачĕсем çĕнĕ правительствăна пурте ырласа çыраççĕ.

«ИРĔКЛĔ АВСТРИЕЦСЕН ЮХĂМĔ» ЯТЛА ОРГАНИЗАЦИ АВСТРИ ХАЛĂХНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра тухакан «Цейтшпигель» хаçат «Ирĕклĕ австриецсен юхăмĕн» заявленине пичетлесе кăларнă. Заявленире çапла каланă: мартăн 29-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Австри чикки урлă каçрĕ. Эпир, ирĕклĕ австриецсен юхăмне пĕрлешнĕскерсем, Хĕрлĕ Çара саламлатпăр. Пирĕн çĕршыва ирĕке кăларма пуçланă куна саламлатпăр. Пĕтĕм тĕнчери мĕнпур австриецсене, союзниксен армийĕсен салтакĕсене, рабочисене, ученăйсене, арçынсемпе хĕрарăмсене пурне те тăшмана çĕнтермешкĕн мĕн кирлине пурне те тума чĕнетпĕр.

ГРЕЦИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИН СОСТАВĔ

АФИНЫ, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Грецин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Булгарис адмирал Грецин çĕнĕ правительствине туса хунă.

Агентство пĕлтернĕ тăрăх, çĕнĕ правительство ĕнер присяга панă.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

АФИНЫ, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Греци правительстви улшăннă пирки Греци компартийĕн руководителĕ Сандос çапла каланă:

«Çĕнĕ правительство туса хурасси монархистла-фашистла сылтăм ушкăнсем хĕснипе пулнă. Вăл—конституцие хирĕçле ĕç, конституцие хирĕç хăйне майлă каварлашни пулать, мĕншĕн тесен политикăллă икĕ пысăк юхăм—демократиллĕ кивĕ партисен тата халăх хирĕç тăрса кĕрешнин юхăмĕ—правительствăна монархистсем-фашистсем хĕстернипе улăштарассине хирĕç пулнă».

Вулгарис правительстви вырăнне представительсенчен тăракан правительство туса хума кирлине палăртса, Сандос çапла каланă:

«Çакăн пек тĕлĕнмелле решени йышăннипе регентство хăй çине пит пысăк ответлăх илет. «Грецирен мар килекен факторсем» çине кăтартса пани ĕçе нимĕн чухлĕ те пулăшмасть».

Юлашкинчен Сандос сылтăм тата сулахай демократсене пурне те «çĕршыва çăлса хăварассишĕн, демократиллĕ ирĕклĕхсемшĕн, çĕршыв лăпкăлăхĕпе вăл малалла аталанассишĕн» кĕрешме чĕннĕ.

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Япони авиацийĕн пысăк вăйĕсем Рюкю утравĕсен районĕнче Америка флотне тапăннă. Японецсенне сахалтан та 150 самолетне персе ўкернĕ. Американецсен темиçе суднине пысăк мар сиен кўнĕ.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран хăватлă 300 бомбардировщикĕ ытла Токио тата Нагоя хулисенчи промышленность объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бирмăри Мандалайпа Мейктила хушшинчи районта японецсен татса илнĕ пысăк вăйĕсене пĕтерсе тăкнă. Вĕсен юлашкийĕсем Мандалайран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри тусем хушшине чакнă.

АТĂЛ ÇИНЧЕ

Атăл çинче Шупашкар хули тĕлĕнче апрелĕн 12-мĕшĕнче, ирхине 8 сехетре, шыв хĕллехи шайран 267 сантиметр çўлĕрех пулнă. Юлашки талăк хушшинче шыв çўллĕшĕ 19 сантиметр хушăннă. Пăр хускалассине кĕтеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ. редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00308 Типографи № 1 Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 10.000